Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

74 (7714) № * Юн кун, 2009 çулхи сентябрĕн (авăн) 16-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Выльăх-чĕрлĕх отрасль аталанăвĕн пуçламăш утăмĕсем**

## Ăратлăх – выльăх пăхаканăн кулленхи тивĕçĕ



**«Свобода» хуçалăхăн Кашмашри сысна фермин заведующийĕ В. Никитин ЧР Ял хуçалăх министрне М. Игнатьева фермăри ăратлăхпа паллаштарать.**

«Чувашское» пĕрлешӳре иртекен ăратлă выльăхсен республикăри куравĕ сентябрĕн 11-мĕшĕнче иртрĕ. Çакнашкал мероприяти республикăра 5-мĕш хут çеç пулин те, пирĕн район ун ĕçĕнчен пĕрре те айккинче пăрăнса юлмасть. Ку хутĕнче те Муркашсем курав пĕтĕмлетĕвĕсемпе чи ырă сăмахсене тивĕçрĕç.

Курава Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕ М. Игнатьев уçрĕ.

– «АПКна аталантарасси» наци проекчĕ ял хуçалăхне ырă улшăнусен варкăшне илсе çитерчĕ. Ыранхи куна пăхса ĕçлекен валли паян пур условисем те пур, патшалăх пулăшăвĕ те айккинче тăмасть. Анчах нумай шутлатпăр, калаçатпăр, çав хушăрах калаçу сакки çинче ларсах пурнăçран юлни пирки çывăха та илместпĕр. Çакна пурте пĕлетпĕр, анчах ăнăçусем вăй илчĕр тесе çĕнĕлĕхсене тата çĕнĕ технологисене пурнăçа кĕртме тытăнса тăратпăр. Çĕннине куллен алла илсе пыракансем вара ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăваççĕ. Вĕсен экономика кăтартăвĕсем те малаллах каяççĕ, – терĕ вăл ăратлă выльăхсен выставкине уçнă май курав тĕллевĕ хуçалăхсем ăратлă выльăх ĕрчетес енĕпе мĕнле ĕçленине ыттисене кăтартасси, республикăри ял хуçалăх организацийĕсене ăратлă çамрăк выльăх ытларах сутасси, ăратлă выльăхпа ĕçленинчен продукци нумайрах илесси, вырăнта паха апат-çимĕç хатĕрлессине ӳстересси пулнине палăртнă май.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)



**Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнчен ăратлă выльăхсен выставкине хутшăннă (сулахайран сылтăмалла) Алина Валериановна Филиппова сысна пăхакан (унăн ушкăнĕнчи сыснасем талăксерен 817 грамм ӳт хушаççĕ), Галина Владимировна Васильева тĕп зоотехник тата «Чувашское» пĕрлешĕвĕн Муркаш районĕнче ăратлăхпа ĕçлекен зоотехникĕ Ирина Ильинична Михайлова.**

**Фермăсем хĕл умĕн**

## Юсавсем пыраççĕ те...

Авăн уйăхĕ хăйĕн утăмĕсемпе васкавлăн иртсе пырать. Кунсем кĕскерех те кĕскерех. Çавăнпа пĕрлех Пукрав та çывăхрах та çывăхрах. Апла пулсан хĕл кунĕсемччен те вăхăт нумаях юлмасть. Çакна курса тăрса район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕхе епле хĕл каçарма хатĕрленнине вырăнсене тухса тĕрĕслеме пуçларĕ.

Малтанхи тĕрĕслевсем Атăл хĕрринчи хуçалăхсенче пулчĕç. Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп специалист-экспертĕнчен Т. Алексеевăран, «Чувашское» пĕрлешĕвĕн Муркаш районĕнче ăратлăхпа ĕçлекен зоотехникĕнчен И. Михайловаран, районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин ветврачĕнчен И. Кирилловаран тăракан рейд ушкăнĕ эрне каялла «Хлебороб», «ВТМ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсенче, С. Даниловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикинче пулса курчĕ.

Асăннă хуçалăхсенче малашлăха пăхса ĕçленипе пĕрлех туса çитерейменни те сахал мар. Акă «Хлебороб» обществăн Апчарти сĕт ферми хĕле хатĕр мар. Кунти 51 пуç мăйракаллă шултра выльăхран 43-шĕ сумалли ĕнесем. Сарайсен алăкĕсене юсаман, ваннă кантăксене лартман. Ферма территорийĕнчех 700 рулон (120 тонна) утă купаласа хунă. Пахалăх анализне пăхсан унта 1-мĕш класлă утă çук. 2-мĕш класли – 83 процент (100 тонна), юлашки – 3-мĕш класли. Çу кунĕсенче 400 тонна силос янтăлама закваска туяннă пулсан та, общество пĕр пĕрчĕ силос-сенаж та хатĕрлемен.

122 сысна пурăнакан Апчарти сыснаferминче те паян строительство ĕçĕсем пурнăçлама стройматериалсем çук. Вĕсене туянма – укçа-тенкĕрен хĕсĕк.

Çак çитменлĕхсене курах ферма территорийĕсенче субботник туса тирпейилем кĕртесси пирки те паян кунччен те шутлани курăнмасть. Ахальлĕн ферма таврашĕ çум курăкĕпе тĕрлĕ ăпăр-тапăр тыткăнĕнче.

Çав вăхăтрах Кĕрекаçри «ВТМ» обществăпа С. Даниловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕн сысна витинче 260 пуç сысна валли условисем палăрмаллах лайăх. Кунта юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ, ăна валли стройматериалсем те çителĕклĕ. Пӳлĕмсене дезинфекциленĕ. Тулли пахалăхлă комбикорм туянма 500 пин тенкĕ кредит илнĕ. Ку фермăра хĕл кунĕсенче те продуктивлăх пуласси иккĕлентермест.

«Моргаушская» чăх-чĕп фабрики – тăнăç аталанакан предприяти. Фабрикăн производстви çӳллĕ шайрипе пĕрлех реализаци ыйтăвĕ те паянхи кун йĕркинчен инçетре тăмасть: фабрикăн суту-илӳ точкисем кăна çиччĕ. Çакă хăех кунта производство çине пысăк тимлĕх уйăрни пирки калать. Апла пулсан вĕсем çитес хĕл кунĕсене те паянах хатĕр.

**А. БЕЛОВ.**

**Раççейре**

## Ĕç рынокĕнчи лару-тăру

РФ Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерстви ĕç рынокĕнчи лару-тăрупа интересленсех тăрать, мониторингсем ирттерет. РФ субъекчĕсенчен 83-шĕнчи 55601 организацире çынсене ĕçрен хăтарни пирки пĕлтернĕ ĕнтĕ.

Ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕсенче шута илнĕ çынсен йышĕ кăçалхи çурла уйăхĕн 2-мĕшĕ тĕлне 2111,68 пин çын юлнă е 0,7 процент чакнă. Вĕсен йышĕ юлашки эрнере 64 субъектра, çав шутра Липецк облаçĕнче, Çурçĕр Осети, Алани, Мордва, Чăваш Республикисенче сахалланнă.

Мускав, Мурманск, Чулхула облаçĕсенче, Пермь крайĕнче, Санкт-Петербургра, Чечен Республикинче вара кăтарту малтанхи эрнеринчен улшăнман. 13 регионта, çав шутра Киров облаçĕнче, Хабаровск крайĕнче, Алтайра, Ямал-Ненецк автономи облаçĕнче вĕсем нумайланнă та. 2008 çулхи юпа уйăхĕнчен тытăнса ĕçрен хăтарнисен пĕтĕм йышĕ 639186 çынна çитнĕ. Вĕсенчен 176689-шне вырăн тупса панă (çавсенчен 100237-шне – малтанхи организацисенчех).

Администраци айăпĕпе ĕçлеменнисен, тулли мар ĕç кунĕпе вăй хунисен, çавăн пекех ертӳçĕсем пуçарнипе отпуска янисен хисепĕ 1637,86 пин çын пулнă.

**В. ИЛЬИНА.**

**Район уй-хирĕсенче**

## Малашлăха пăхса тимлеççĕ

Çĕр ĕçченĕ çут çанталăкăн ăшă та уяр вăхăчĕпе туллин усă курса умри тĕллевĕсене туллин пурнăçласа пырать. Пĕрисем вĕçленнĕ çĕре теприсем вăй илсе пыраççĕ. Сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчен район администрацийĕн ял хуçалăх пайне тăратакан оперативлă кăтартусемпе килĕшӳллĕн пур хуçалăхсенче те «хир карапĕсем» вырма вĕçлерĕç. Çĕр ĕçченĕ кăçалхи вырмара çухатусемсĕр майлах 12548 гектар çинче пăхса ӳстернĕ тырăпулăна кĕлете кĕртсе хучĕ. Вырма пуссисен 94,5 процентне те улăмран тасатнă ĕнтĕ.

Ĕнерхи куна çĕнĕ тырăн вăтам тухăçĕ районĕпе гектар пуçне 24,9 центнерпа танлашать. Уйрăмах пысăк тухăçлисем «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики (50 центнер), Чкалов яч. хис. (39,1 центнер), Ильич яч. хис. (35,2 центнер), «Ударник» (33,9 центнер), «Восток» (31,7 центнер), «Герой» (30,1 центнер), Суворов яч. хис. (29,4 центнер).

Хиртен йĕтемсем çине пурĕ 31236 тонна çĕнĕ тырă кĕнĕ. Çĕнĕ тырă виçи уйрăмах «Ударник», Суворов яч. хис., «Свобода» хуçалăхсенче пысăк.

Вырма ирттерсе хирсене пушатнă май хуçалăхсенче çĕртме сухи вăй илсе пырать. Районĕпе ăна 1687 гектар çинче тунă та.

Кĕр аки ирттерме хуçалăхсем пурĕ 6883 гектар çĕр хатĕрленĕ. Ку вăл малтан пăхнинчен 125,1 процент пулать. Çак ĕçре пусу тытнă хирсем кăçал хуçалăхсене пысăк тĕкĕ панине палăртма кăмăллă.

Районĕпе пурĕ 6388 гектар (116,1 процент) кĕрхи культурăсем акнă. Ку ĕç вĕçленчĕ. Кĕрхисем акассине Е. Андреев яч. хис., «Свобода», «Ударник», Чапаев яч. хис., «Оринино», Чкалов яч. хис. хуçалăхсем планпа пăхнинчен ытларах пурнăçланă (205, 130, 129, 140, 118 тата 104 процент). Хресчен (фермер) хуçалăхĕсене илсен, А. Толстов, В. Бархаткин, С. Сретинский хуçалăхĕсем кĕрхи культурăсене малтан палăртнинчен 200, 200, 140 процент ирттерсе акса хăварнă.

Паян хуçалăхсем çĕр улми пуссисенче вăй хураççĕ. Кĕске вăхăтрах районти 1527 гектартан 1076 гектарне пуçтарса кĕртнĕ те ĕнтĕ.

«Иккĕмĕш çăкăрăн» вăтам тухăçĕ 135,2 центнерпа танлашать. Çав вăхăтрах «Ударник» хуçалăхпа «Удача» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра унăн виçи 200 центнера çитет.

Районта 7 гектар (11,5 процент) выльăх кăшманĕ кăларнă.

**Хамăр инф.**

**Ыйту – хурав**

## Сирĕн ыйтусем çине Чăваш Енри Патшалăх ĕç инспекцийĕн специалисчĕсем хуравлаççĕ

### Камăн правасем ытларах?

**Хальхи вăхăтра предприятисемпе организацисенче ĕç вырăнĕсене чакарни вăрттăнлăх мар. Анчах та çакăн пек чухне ĕç вырăнĕнчех юлма камсен ытларах шанăç пурха?**

РФ Ĕç кодексĕн 179-мĕш статйипе килĕшӳллĕн ĕçлекенсен йышне е штатне чакарнă чухне чи малтанах ĕçре пысăк тухăçпа ĕçлекенсене тата пысăк квалификациллисене хăварма тивĕç.

Ĕç тухăçлăхĕпе квалификаци шайĕ пĕр пекех пулсан вара çакна шута илеççĕ: çемьеллĕ пулнине (çемьере тăрантарса пурăнаканăн икĕ е ытларах çын пулнине, вĕсен тăранса пурăнмалли тупăшĕ пĕтĕмĕшле унăн ĕç укçийĕпе çыхăннине); çемьере урăх хăй тĕллĕн ĕç укçи ĕçлесе илекенсем пулманнине; асăннă ĕç паракан патĕнче ĕçлесе ĕçре инкек тӳснине; Аслă Отечественнăй вăрçă е ытти çапăçусен инваличĕ пулнине; ĕçрен уйрăлмасăрах ĕç паракан направленийĕпе хăйĕн квалификацине ӳстернине.

Кунпа пĕрлех ĕç тухăçлăхĕпе квалификаци шайĕ пĕр пек чухне камсене чи малтанах ĕçре хăварассине коллективлă килĕшӳре те пăхса хăварма пултараççĕ.

### Мĕн вăхăт маларах пĕлтермелле?

**Ĕç вырăнĕсене чакарнă чухне ĕçлекене ун пирки мĕн вăхăт маларах пĕлтерме тивĕç?**

Раççей Федерацийĕн Ĕç кодексĕн 180-мĕш статйин 2-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн организаци пĕтесси, ĕçлекенсен йышĕ е штачĕ чакасси пирки ĕç паракан ĕçлекенсене икĕ уйăх маларах пĕлтерме тивĕç. Ун пирки ĕçлекен çынна алă пустарса çирĕплетмелле.

Кунпа пĕрлех ĕç паракан ĕçлекен çынпа ĕç килĕшĕвне çав вăхăт çитмесĕрех пăрахăçлама пултарать. Анчах та ун пек чухне ĕçлекен çыннăн алă пусса çирĕплетнĕ килĕшĕвĕ кирлĕ тата ăна çав тапхăршăн вăтам ĕç укçи тӳлеме тивет.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

**Саламлатпăр**

Ильинка ял тăрăхне кĕрекен Тяпакасси ялĕнче пурăнакан хаклă хĕрĕме, савнă мăшăра, юратнă аннене, кăмăллă мамака, хисеплĕ тăванăма – **Надежда Валерьяновна МОКЕЕВАНА** 50 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн, мĕн пур кăмăлтан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ĕçре ăнăçусем сунатпăр, килте яланах килĕшӳ пултăр, çирĕп сывлăхпа нумай пурăнма сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: ашшĕпе амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, шăллĕпе мăшăрĕ, 4 мăнукĕ, хăтипе тăхлачисем тата çывăх тăванĕсем.**

**ÇЫРĂНТАРУ**

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2010 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма унччен хакпах çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 191 тенкĕ те 70 пус.**